Инв. № 2995 11—3с3

С. С. ЯГУНОВ

ЧĂВАШ ЧĔЛХИН ГРАММАТИКИ

I-мĕш ПАЙĔ

ПУÇЛАМĔШ ШКУЛĂН ПĔРРЕМĔШ КЛАСĔ ВАЛЛИ

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР • 1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
24 февраля 1941 г.
Подпись Степанова

С. С. ЯГУНОВ

ЧӐВАШ ЧӖЛХИН ГРАММАТИКИ

I-МӖШ ПАЙӖ

ПУҪЛАМӖШ ШКУЛӐН ПӖРРЕМӖШ КЛАСӖ ВАЛЛИ

Чӑваш АССР Халӑх Ҫутӗҫ Комиссариачӗ ҫирӗплетнӗ

ВИҪҪӖМӖШ ИЗДАНИ

ЧӐВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1941

ТУПМАЛЛИ

		стр.
1 §.	Малтанхи хӑнӑхтарусем	3
2 §.	Предложени	8
3 §.	Предложенири сӑмахсен ҫыхӑнӑвӗ	14
4 §.	Сӑмахсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырасси	16
5 §.	Сасӑ. Алфавит	20
6 §.	Сӑмах сыпӑкӗсем. Сӑмаха пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарасси	23
7 §.	Хытӑ тата ҫемҫе уҫӑ сасӑсем	26
8 §.	Ҫемҫетмелли паллӑ (ь) ҫырасси	27
9 §.	Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ саспаллисене ҫырасси	31
10 §.	Мӑшӑр сӑмахсене ҫырасси	32
11 §.	Вӗреннине аса илсе ҫирӗплетесси	34

Редактор Н. Т. Васянка.

Подписано к печати 30/I-41 г. НТ 2399 Заказ № 916. Тираж 30.000 Объем 2,25, уч. авт. лист 2,25

г. Чебоксары. Тип. № 1 Упр. Издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.

1 §. Малтанхи хăнăхтарусем.

1-мĕш задача. Çак сăмахсене вуласа тухăр:

лаша, перо, çăмха, кĕнеке, линейка, пукане.

Вăл сăмахсене картинкăсем ӳкернĕ йĕркепе çырса илĕр.



2-мĕш задача. 1-мĕш задачăри сăмахсене тата тепĕр хут çак йĕркепе çырса илĕр: малтан **вĕренмелли япаласен ячĕсене**, унтан **вылямалли япаласен ячĕсене**.

Вĕренмелли япаласем: . . . . .
Вылямалли япаласем: . . . . .

3-мӗш задача. Картинкӑсем ӳкерӗр те вӗсен айне ячӗсене çырӑр:

тенкел, йывӑç, чӳрече,
витре, мӑлатук, çурла.

4-мӗш задача. Сӗтел-пукан ячӗсене çакӑнта ӳкернӗ картинкӑсен йӗркипе çырса илӗр:

хыçлӑ пукан, сӗтел, арча,
тенкел, кровать, шкап.



5-мӗш задача. Савӑт-сапа ячӗсене çакӑнта ӳкернӗ йӗркепе çырса илӗр.

чашӑк, хуран, чӳлмек,
çӗçӗ, чейник, кашӑк,
стакан, вилка.

6-мĕш задача. Выльăх-чĕрлĕх ячĕсемпе тискер кайăксен ячĕсене çакăнта ÿкернĕ йĕркепе çырса илĕр:

тилĕ, кашкăр, кушак йытă, ĕне, мулкач; така, упа, лаша, сысна, качака.



7-мĕш задача. 6-мĕш задачăри сăмахсене ҫак йĕркепе ҫырса илĕр:

Тискер кайăксем: . . . .
Килти выльăхсем: . . . .

8-мĕш задача. Тумтир ячĕсене ҫакăнта ӳкернĕ йĕркепе ҫырса илĕр:

пальто, кăҫата, пушмак, ата, тăлăп, ҫĕлĕк, калуш, картус, шлепке.

9-мĕш задача. Ҫак сăмахсене вулăр:

ҫăмха, коньки, йĕтĕр, ҫуна, урапа, ҫунашка.

Хĕлле кирлĕ япаласене тата **ҫулла** кирлĕ япаласене уйрăммăн ҫырăр.

Хĕлле кирлĕ япаласем: . . . .
Çулла кирлĕ япаласем:

10-мĕш задача. Вĕçен кайăк ячĕсене çак йĕркепе çырса илĕр:

Килти кайăксем: . . . .
Ирĕкри вĕçен кайăксем: . . . . .

11-мĕш задача. Картинкăсене пăхса, кам мĕн ĕçленине çырса пĕтерсе парăр.

Вутă çуракан . . . . Çĕвĕçĕ . . . . Вĕренекен . . . . Утă çулакан . . . . Столяр . . . .

Кирлĕ сăмахсем: *çулать, шутлать, вутă çурать, тататъ, çĕлет.*

Тĕслĕх: *Вутă çуракан вутă çурать.*

§ 2. Предложени.

12-мĕш задача. Малтан **ача** çинчен, унтан **столяр** çинчен, кайран **тимĕрçĕ** çинчен каланине вуласа тухăр. Унтан мĕн вуланине çырса илĕр.

Ача вулать.
Столяр савалать.
Тимĕрçĕ туптать

13-мĕш задача. Сулахай енчи сăмахсемпе сылтăм енчи сăмахсене пĕр-пĕринпе майлаштарса кăтартнă пек çырăр.

Тĕслĕх: *Йытă вĕрет.*

Йытă	вĕçет
Кайăк	вĕрет

Пулă	калаçать
Лаша	мĕкĕрет
Çын	кĕçенет
Ĕне	ишет

14-мĕш задача. 13-мĕш задачăри пекех туса çырăр.

Тĕслĕх: *Хăяр симĕс.*

Хăяр . . .
Сахăр . . .
Çарăк . . .
Сухан . . .
Купăста . . .
Помидор . . .

Кирлĕ сăмахсем: *симĕс, йӳçĕ, шурă, сарă, хĕрлĕ, пылак.*

15-мĕш задача. Картинкăсем тăрăх йĕркелесе предложенисем çырса илĕр.

Атте хаçат вулать.
Анне чӳрече çăвать.
Йăмăк юртан кĕлетке тăвать.

16-мĕш задача. Çак предложенисене вуласа тухăр. Точка тĕлĕнче чарăнса тăрăр.

Точка умĕнчи сăмах çинче сасă анать. Шухăш ăçта пĕтни сасăран палăрать.

Мĕнле çӳреççĕ?

Пулă ишет. Хурт шăвать. Курак вĕçет. Шăрчăк сикет. Лаша чупать. Ĕне утать. Шăна вĕçет.

Пулă ишет тенинче миçе сăмах? Пĕтĕмпе кунта миçе предложени? Предложени хыççăн мĕн лартнă? Предложенисене мĕнле саспаллипе пуçласа çырнă?

17-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. Ыйтусем вырăнне кирлĕ сăмахсене кӳртсе çырăр.

Тĕслĕх: *Çĕвĕçĕ йĕппе çĕлет.*

Çĕвĕçĕ *(мĕнпе?)* çĕлет.
Тимĕрçĕ *(мĕнпе?)* туптать.
Вутă çуракан *(мĕнпе?)* çурать.
Вĕренекен *(мĕнпе?)* çырать.
Тракторист *(мĕнпе?)* сухалать.

Кирлĕ сăмахсем: *Тракторпа, пуртăпа, мăлатукпа, йĕппе, карандашпа.*

18-мĕш задача. 17-мĕш задачăри пекех тăвăр.

Çĕвĕçĕ (*мĕн?*) çĕлет.
Тимĕрçĕ (*мĕн?*) туптать.
Вутă çуракан (*мĕн?*) çурать.
Вĕренекен (*мĕн?*) çырать.
Тракторист (*мĕн?*) сухалать.

Кирлĕ сăмахсем: *кĕпе, çыру, вутă, çĕр, çава.*

19-мĕш задачи. Сулахай енчи сăмахсемпе сылтăм енчи сăмахсене кирлĕ пек çыхăнтарăр та мĕн ăçта ӳснине çырăр.

Тĕслĕх: *Мăйăр вăрманта ӳсет.*

Ыраш	*(ăçта?)*	ӳсет.	уйра
Çарăк	*(ăçта?)*	ӳсет.	вăрманта
Панулми	*(ăçта?)*	ӳсет.	улăхра
Юман	*(ăçта?)*	ӳсет.	пахчара
Утă	*(ăçта?)*	ӳсет.	садра

20-мĕш задача. а) **Кĕр** тата **хĕл** çинчен каланă предложенисене вуласа тухăр.

б) **Тăман** çинчен, **пас** çинчен, **çĕр** çинчен, **çуна тупанĕ** çинчен каланă предложенисене çырса илĕр.

Кĕр.

Çумăр çăвать.
Çĕр нӳрленет.
Кураксем вĕçсе каяççĕ.
Хир пушанса юлать.

Хĕл.

Çырмара пăр.
Пас йăлтăртатать.
Çуна тупанĕ чăкăртатать.
Тăман вĕçтерет.

21-мĕш задача. Картинкăсем çине пăхăр та лаша мĕн туни çинчен тата ĕне мĕн туни çинчен калăр, унтан çырăр. Çырса пĕтерсен точка лартăр.

22-мĕш задача. Çак статьяна вуласа парăр. Кашни предложение вуланă хыççăн кăшт чарăнса тăрăр. Вуланă статьяран предложенисене çакăн пек йĕркепе çырса илĕр: малтан икĕ сăмахлă предложенисене, унтан виçĕ сăмахлă предложенисене, кайран пилĕк сăмахлă предложенисене çырса илĕр.

Хёлле.

Хёвел сахал ăшăтать. Шывсем шăнса ларнă. Пур çёрте те шурă юр. Сивётет аванах. Час-часах тăман вёçтерет. Çынсем ăшă тумтир тăхăнса çӳреççё.

23-мёш задача. Малтан **хёл** çинчен каланă предложенисене, унтан **çу** çинчен каланă предложенисене çырса илёр.

Сивёсем пуçланчёç. Ачасем тăвайкки çине шыв сапаççё. Çырмасем шăнса ларнă. Пуç тăрринче тăри юрлать. Хирсенче тырăсем пуçтараççё.

24-мёш задача. Çак предложенисене сасăпа вуласа тухăр. Предложенисенче миçешер сăмах? Малтанхи предложенире хăш сăмах çинче сасă анать? Иккёмёш предложенире? Виççёмёшёнче? Тăваттăмёшёнче?



1. Ачасем шкулта.

2. Ачасем шкулта вĕренеççĕ.

3. Ачасем шкулта вулаççĕ, çыраççĕ.

4. Ачасем шкулта вулаççĕ, шутлаççĕ, çыраççĕ.

25-мĕш задача. Çак предложенисене вуласа тухăр, унтан вĕсене çырса илĕр. Хăш сăмаха каланă чухне сасă анать, çавна аялтан пĕр йĕрпе туртăр.

Предложени вĕçĕнче сасă аннине асăрхăр.



Пÿртре кăмака. Кăмакана вутă хутаççĕ. Кăмакаран ăшă тухать. Кăмакара апатçимĕç пĕçереççĕ.

26-мĕш задача. Çак статьяна лайăх вуласа тухăр. Предложени вĕçĕнче сасă аннине асăрхăр, унта кăшт чарăнса тăрăр.

Хĕллехи кас.

Çанталăк уяр. Пĕлĕт тап-таса. Йĕри-тавра шурă юр. Пĕлĕт çинче çăлтăрсем йăл-

тăртатаççĕ. Хăлхана сивĕ чĕпĕтет. Аслă çулпа лавсем пыраççĕ. Çынсем çуна хыççăн утса пыраççĕ.

> Предложени хыççăн точка лартаççĕ. Предложение пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

§ 3. Предложенири сăмахсен çыхăнăвĕ.

27-мĕш задача. Çак сăмахсене аялти кирлĕ сăмахсемпе тĕрĕс çыхăнтарса предложенисем тăвăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Рабочи ĕçлет.*

Рабочи . . . . Эпĕ . . . . Эпир . . . . Шкулта ачасем . . . . Вĕренекенсем задача . . . .

К и р л ĕ с ă м а х с е м: *ĕçлет, çыратăп, вулатпăр, вĕренеççĕ, шутлаççĕ.*

28-мĕш задача. Çырса пĕтермен сăмахсен вĕçĕсене тупса çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *Эпĕ шкулта вĕренетĕп.*

Эпĕ шкул . . . вĕренетĕп. Уроксем хыççăн кил . . . тавăрăнатăп. Кил . . . кĕнеке вулатăп. Шăллăм урам . . . вылять.

29-мĕш задача. Çырса пĕтермен сăмахсен вĕçĕсене тупса предложенисем туса вулăр.

Лаша пăхакан.

Иван лашасене пăхать. Вăл вĕсе . . . апат парать, вăхăт . . . шăварать. Вăл лашасем тăракан вите . . . таса, ăшă тытать. Вăл лаши . . . кулленех тасатать.

30-мӗш задача. Предложенисене ҫырса илнӗ чухне аялта ҫырнӑ сӑмахсене точкӑсем вырӑнне кӳртсе лартӑр.

Пионерсем хӑйсен (...) пухӑнчӗҫ. Пионерсем (...) вӑхӑта аванирттереҫҫӗ. Вожатый (...) питӗ юратать, (...) те вожатӑя юратаҫҫӗ. Вӗсем вожатый каланине аван итлеҫҫӗ.

Кирлӗ сӑмахсем: *пионерсене, пионерсем, сборне, сборта.*

31-мӗш задача. Ҫак картинкӑсем ҫине мӗн ӳкернине каласа парӑр.

32-мӗш задача. Кирлӗ сӑмахсене хӑйсен вырӑнне кӳртсе лартса, ҫак предложенисене ҫырса илӗр.

Вӑйлӑ ... вӗрет. Вӗренекен ... каять. Ун хыҫҫӑн ... чупса пырать. Вӗренекен ... тата ... тӑхӑннӑ. Вӑл ... йӑтса пырать.

Кирлӗ сӑмахсем: *йытӑ, ҫил, кӑҫатӑ, пальто, сумка, шкула.*

33-мӗш задача. Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Вӗсене картинкӑсем ӳкернӗ йӗркепе ҫырса илӗр. Точкӑсем лартма тата пысӑк саспаллисем ҫырма ан манӑр.

Пӗр улакуракӗ йытта хӳринчен сӑхса илнӗ. Тепӗр улакуракӗ ашне хыпса илнӗ. Икӗ улакурак вӗҫсе пынӑ. Йытӑ аш татӑкне ҫиме тытӑннӑ. Икӗ улакуракӗ те вӗҫсе тарнӑ.

§ 4. Сӑмахсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырасси.

34-мӗш задача. Малтан арҫын ача ячӗсене, унтан хӗрача ячӗсене ҫырса илӗр.

Илюш, Ванюк, Павăл.
Якку, Петя, Ольга, Вера,
Кĕркури, Максăм, Варвари,
Антун, Анна, Лиза, Шура,
Зина, Эрхип, Настуç.

35-мĕш задача. Çак статьяна вуласа тухăр, унтан çырса илĕр.

Тăвайкки ярăнни.



Нина, Миша тата Коля пĕр килте пурăнаççĕ. Мишăпа Коля тăвайкки тунă. Вĕсем патне Нина пынă. Вĕсем виççĕшĕ те ярăннă.

36-мĕш задача. Çак статьяна вуласа тухăр. Унтан ăна каласа парăр.

Микула шыва кайни.

Микула пăр çинче ярăннă. Вăл çӳхе пăр çине кĕнĕ. Сасартăк пăр çурăлса кайнă. Микула шыва кĕрсе ӳкнĕ. Çакна Петĕрпе Вася курнă. Петĕрпе Вася Микулана шывран туртса кăларнă.

37-мӗш задача. Портретсем айӗнчи ятсене хӑвӑр тетрадӗрсем ҫине ҫырса илӗр.

Владимир Ильич
Ленин.

Иосиф Виссарионович
Сталин.

Вячеслав Михайлович
Молотов.

Михаил Иванович
Калинин.

Климент Ефремович
Ворошилов.

38-мӗш задача. Точкӑсем вырӑнне ҫын ячӗсене ҫырӑр. Ятсене пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫырӑр.

Эпӗ . . . ятлӑ. Манӑн аттене . . . тесе чӗнеҫҫӗ. Манӑн аппа . . . ятлӑ. Манӑн юлташсем . . ., . . ., . . ., . . . ятлӑ.

Çын ячĕсене, хушамачĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

39-мĕш задача. Çак предложенисене вуласа тухăр. Çын ячĕсене тетрадĕрсем çине çырса илĕр.

Илюш пиччесен Верукĕ шкула пĕр кун сиктермесĕр çӳрет. Верук уроксене яланах лайăх хатĕрлет. Верук Зинăпа ăмăртса вĕренет. Вĕсене кура Виктор, Петĕр, Урине, Пурис, Санюк та тăрăшса вĕренме тытăнчĕç.

40-мĕш задача. Хăвăр юлташăрсен ячĕсене çырăр.

41-мĕш задача. Малтан хула ячĕсене, унтан ял ячĕсене, юлашкинчен шыв ячĕсене çырса илĕр.

Мускав хули, Шемшер ялĕ, Атăл шывĕ, Шупашкар хули, Ленинград хули, Çавал шывĕ, Ульяновск хули, Улатăр хули, Сăрă шывĕ, Çĕрпӳ хули, Канаш хули, Энĕш шывĕ, Етĕрне хули, Тăвай ялĕ, Элĕк ялĕ.

42-мĕш задача. Предложенисене çырса илнĕ чухне точкăсем вырăнне хула е ял ячĕсене кӳртсе лартăр.

Эпир... ялĕнче (хулинче) пурăнатпăр. Пиртен инçех мар... хули пур. Эпир аттепе... хулинче пултăмăр. Эпĕ çитĕнсессĕн... хулине вĕренме каятăп.

Ял, хула, шыв ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

43-мĕш задача. Хăвăр пĕлекен ялсен, хуласен, шывсен ячĕсене çырăр.

Эпĕ пĕлекен ялсем: . . . .
Эпĕ пĕлекен шывсем: . . . .
Эпĕ пĕлекен хуласем: . . . .

44-мĕш задача. Малтан колхоз ячĕсене, унтан завод ячĕсене çырса илĕр.

„Октябрь" колхоз, „Динамо" завод, „Большевик" завод, „Ударник" колхоз, „Трактор" колхоз, „Комбайн" колхоз, „Малалла" колхоз.

> Колхоз, завод ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

45-мĕш задача. Çак йытă ячĕсене çырса илĕр.

Анчăк, Эскам, Кампур, Полкан, Шарик, Дружок, Трезор, Волчок.

46-мĕш задача. Хăвăр колхозри лаша ячĕсене çырăр.

Тĕслĕх: *Пирĕн колхозри лашасем:* ***Машка, Сивка.***

> Тĕрлĕ выльăх-чĕрлĕхсене уйрăм ятпа чĕнеççĕ пулсан, вĕсен ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

5 §. Сасă. Алфавит.

47-мĕш задача. Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

ака, алă, ăса, эпĕ, эсĕ, ура.

Çак сăмахсен пирвайхи сыпăкĕсене уйрăм çырса илĕр. Вăл сыпăксене вулăр. ***А, ă, у, э*** сыпăксене уйăрма пулать-и?

Иккĕмĕш сыпăксене çырса илĕр. ***Ка*** сыпăка уйăрма пулать-и? ***лă*** сыпăка уйăрма пулать-и? ***са*** сыпăкпа ***ка*** сыпăкăн пĕр пек сасă пур-и? ***пĕ*** сыпăкпа ***сĕ*** сыпăкăн пĕр пек сасă пур-и? Мĕнле сасăсем вĕсем? Мĕнле сасăсем уйрăм?

48-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илнĕ чухне точкăсем вырăнне сасăсен паллисене çырăр.

Тĕслĕх: *Çил ууу улать.*

Çил ... улать. Çĕлен ... тет. Хур ... тет. Йытă ... тăвать.

(*шшш ..., ууу ..., ррр ..., ссс ...*)

49-мĕш задача. Çак сăмахсене вулăр. Кашни йĕркере пур сăмахра та тĕл пулакан сасăсене тупăр. Çав сасăсене çырăр.

1. Алăк, кашăк, кăмака, алă, таса.
2. Тăвар, çăкăр, тутлă, шурă, кăвак.
3. Сахăр, таса, сехет, сарă, сасă.
4. Йӳçĕ, тӳрĕ, ĕнер, ĕмĕр, ĕне.

Сăмахра темиçе сасă пулать. Сасса саспаллипе паллă тăваççĕ.

Асăрхăр: Сасса чĕлхе-çăварпа калатпăр, хăлхапа илтетпĕр.

Саспаллине алăпа çыратпăр, куçпа куратпăр.

50-мĕш задача. Çак сăмахсене мăшăрăн-мăшăрăн танлаштарăр. Вĕсенче мĕнле сасăсем пĕр пек, мĕнле сасăсем уйрăм?

ала ула	тура пура	курак курăк	тĕп туп
хула хулă	хур хура	тат тыт	тĕлĕк çĕлĕк
тилĕ килĕ	хуран хурăн	суран çуран	тупать чупать

51-мĕш задача. Çак сăмахсене çырса илĕр. Унтан вĕсемпе юнашар çав сăмахсенех, ***с*** вырăнне ***ç*** лартса, çырăр; вĕсем урăх сăмах пулнине асăрхăр.

Тĕслĕх: *кас—каç, пус—пуç, сап—çап.*

сапла— . . .	сăтăр— . . .	сут — . . .
сăмах— . . .	сӳре — . . .	сĕт — . . .
симĕс— . . .	сыхă — . . .	сис — . . .
сĕр — . . .	сыр — . . .	сул — . . .

52-мĕш задача. Алфавита тетрадьсем çине çырса илĕр. Унтан ик-виçĕ хут вуласа тухăр.

Чăваш чĕлхинче мĕн пурĕ 36 саспалли: Вĕсен алфавитла йĕрки çакăн пек:

Аа	Ăă	Бб	Вв	Гг	Дд	Ееё
Ёё	Жж	Зз	Ии	Йй	Кк	Лл
Мм	Нн	Оо	Пп	Рр	Сс	Çç
Тт	Уу	Ӳӳ	Фф	Хх	Цц	Чч
Шш	Щщ	ъ	Ыы	ь Ээ	Юю	Яя

53-мӗш задача. *А, у, э, и, ы, м, н, п, к, х, с* сасӑсене уйрӑм каласа пӑхӑр. Хӑш сасӑсене каланӑ чухне ҫӑвара ытларах уҫатпӑр? Хӑш сасӑсене каланӑ чухне сахалтарах уҫатпӑр?

А, ӑ, э, ӗ, и у, ӳ, о, ы, е, ю, я—уҫӑ саспаллисем. *Б, в, г, д, ж, з, й, к, л, м, н, п, р, с, ҫ, т, ф, х, ц, ч, ш, щ*—хупӑ саспаллисем.

54-мӗш задача. Ҫак статьяна вуласа тухӑр. Унтан ӑна ҫырса илӗр те уҫӑ саспаллисене аялтан туртӑр.

Тырӑ лайӑх пултӑр тесен.

Тырӑ лайӑх пултӑр тесен, анасене кӗркуннех сухаласа хӑвармалла. Акана вӑхӑтра тумалла. Лайӑх сухаласа сӳремелле. Таса вӑрлӑх акмалла. Ҫумсене пӗтермелле.

6 §. Сӑмах сыпӑкӗсем. Сӑмаха пӗр йӗркерен тепӗр йӗркене куҫарасси.

Ку-кук!   Ка-ка-ка!   Ки-ки-рук!   Как!

55-мӗш задача. Ҫак сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн уйӑрса вулӑр.

сӑмах	кӗнеке	пионер	вӗренекен
арман	кӑмака	колхоз	карандаш
кушак	журнал	илтӗнет	революци

Арман сӑмаха каланӑ чух эпир ҫӑвара миҫе хут уҫатпӑр? **Кӗнеке** сӑмаха каланӑ чух? **Вӗренекен** сӑмаха каланӑ чух?

56-мĕш задача. **Кăвакарчăн** сăмаха тăсса сыпăкăн-сыпăкăн калăр. Çак сăмахра миçе сыпăк? Малтанхи сыпăкĕ мĕнле? Иккĕмĕшĕ? Виççĕмĕшĕ? Тăваттăмĕшĕ? Çак сăмахăн сыпăкĕсене кĕске йĕрпе уйăрса çырăр. Кашни сыпăкĕнче миçе уçă сасă? Уçă сасăсăр пĕр сыпăк та пулин пур-и?

Çавăн пекех **машина, вĕрене, пĕрене** сăмахсене те уйăрăр.

57-мĕш задача. Çак сăмахсене çырса илĕр. Çырса илнĕ чухне сăмахсене кĕске йĕрпе сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр. Хăш сăмах миçе сыпăка пайланнине асăрхăр.

Тĕслĕх: *пе-ро, ла-ша, су-рăх, кă-ма-ка.*

Колхоз, ыраш, колхозник, ак, выр, лар, тăр; Анна, Ваня, Миша, Петя, пионер, комсомолец, большевик, ударник, отличник.

> Сăмаха темиçе пая уйăрма пулать. Сăмах пайне ***сыпăк*** теççĕ.
>
> Сăмахра миçе уçă сасă, çавăн чухлĕ сыпăк пулать.

Ак, выр, лар—пĕр сыпăклă сăмахсем.
Тырă, лаша—ик сыпăклă сăмахсем.
Çĕрулми, пионер—виç сыпăклă сăмахсем.
Комсомолец—нумай сыпăклă сăмах.

58-мĕш задача. Çак сăмахсен çитмен сыпăкĕсене тупса çырăр, вĕсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр.

Вĕçен кайăксем.

Ку- . . .	Кă-ва- . . .	. . . -рăш
Шăп- . . .	Те-кер- . . .	. . . -ка

Çер- . . .	Тăр- . . .	. . . -хан
Кук- . . .	Кă-сă- . . .	. . . -чăка

[кăвакал, çерçи, хурчăка, шăпчăк, тăрна, куккук, курак, чавка, текерлĕк, çăхан, кăсăя, карăш].

59-мĕш задача. Ятсене çак йĕркепе çырса илĕр: малтан пĕр сыпăклисене, унтан икĕ сыпăклисене, юлашкинчен виçĕ сыпăклисене.

Иван, Зоя, Сергей, Нил, Микула, Ваня, Васюк, Коля, Элекçи, Ехрим, Роман, Зина.

60-мĕш задача. Уйрăм сыпăксене çыпăçтарса сăмахсем тăвăр. Çĕнĕрен пулнă сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрса çырăр.

Ту, Су, Ху, Пу — лă

ка — рас, йăк, шăк, пан

Чӳ, Пĕ, Сĕ, Кĕ — ре — че, не, ке, çе

кур, вула, кай, çыр — ка — ла, ла, ла, ла

61-мĕш задача. Па, ку, та, пу, кĕ, çу сыпăксемпе пуçланакан сăмахсем тупăр.

62-мĕш задача. Çак сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн çырса илĕр.

Тĕслĕх: *Ан-не, тă-ри.*

Анне, тăри, вăрман, çаран, кашкăр, кăшман, çеçпĕл, кăркка.

63-мĕш задача. Çак сăвва çырса илĕр. Çырса илнĕ чух сăмахсене сыпăкăн-сыпăкăн уйăрăр. Унтан сăввине пăхмасăр калама вĕренĕр.

Ворошилов патне янă çыру.

Çыру çыртăм эпĕ
Ворошилов патне:
„Юлташ Ворошилов,
Халăх комиссарĕ!
Пысăк телей килчĕ
Пирĕн çемьене:
Хĕрлĕ Çара илчĕç
Манăн пиччене...“

64-мĕш задача. Сăмахсене епле куçармаллине кăтартса парăр.

Тĕслĕх: *чĕ-кĕнтĕр, чĕкĕн-тĕр, вĕ-ренекен, вĕре-некен, вĕрене-кен.*

Купăста. Кишĕр. Хăяр. Улма. Сухан. Кавăн. Çарăк. Панулми. Кĕтмел. Хурлăхан. Пĕрлĕхен.

7 §. Хытă тата çемçе уçă сасăсем.

65-мĕш задача. Çак уçă сасăсене каласа парăр: ***а, ă, ĕ, ы, и, у, ӳ, о, э.***

Ы сасăпа ***И*** сасса танлаштарса пăхăр: хăшĕ хытăрах, хăшĕ çемçерех илтĕнет? ***А*** сасăпа ***ĕ*** сасса, ***у*** сасăпа ***ӳ*** сасса танлаштарса пăхăр: вĕсенчен хăшĕ хытăрах, хăшĕ çемçерех илтĕнет?

Хытă уçă сасăсем: ***а, ă, у, ы, о.*** Çемçе уçă сасăсем: ***э (е), ĕ, и, ӳ.***

Кусемсĕр пуçне ***й***-па пĕрлешнĕ (йотованнăй) сасăсем пур: е (йе), ё (йо), я (йа), ю (йу).

Уçă сасăсене çырса илĕр: ***а, ă, э, ĕ, и, у, ÿ, о, ы, е.***

66-мĕш задача. Çак сăмахсене çырса илĕр. Хытă уçă саспаллисене аялтан туртăр.

Хут, кашăк, картина, кушак, парта, тулă, урпа, пăри, ыраш, урапа, Шупашкар, Хусан, Канаш.

67-мĕш задача. Çак статьяна çырса илĕр. Хытă уçă саспаллисене пĕр йĕрпе, çемçе уçă саспаллисене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.

Колхозра.

Хĕвел хĕрелсе тухрĕ. Колхозниксем ĕçе кайма хатĕрленеççĕ. Колхозра тырă çулленех вăйлă пулать. Выльăх-чĕрлĕх ăратлă, шултăра. Колхозниксен çурчĕсем тирпейлĕ, таса.

Таса, тырă, вăйлă—хытă уçă сасăллă сăмахсем. ***Хĕвел, ĕçе, хĕрелсе***—çемçе уçă сасăллă сăмахсем.

8 §. Çемçетекен паллă *(ь)* çырасси.

68-мĕш задача. Çак сăмахсене çырса илĕр. Вĕсен вĕçĕсем мĕнле илтĕннине асăрхăр.

курать	тăрать	мăкăнь
кÿрет	тĕрет	хĕрен
пулать	çăрать	супăнь
пÿлет	çĕрет	йĕтĕн
сурать	хăрать	кукăль
сÿрет	хĕрет	çекĕл

А, я, ă, у сасăллă сыпăксенче *(ь)* çыраççĕ. Çакăн пек сасăллă сыпăксенче çемçетмелли паллă *(ь)* çырмасан, урăх сăмах пулать: турать — турат, сурать — сурат, анать — анат, канать — канат.

Тĕслĕхсем:

Йывăçăн турат пур.

Хирте сурат нумай.
Пирĕн шкул ялăн
анат вĕçĕнче.
Кайăкăн çунат пур.

Сӳсрен явнă канат
çирĕп.

Анне купăста
турать.
Суран сурать.
Туран пароход
анать.
Типĕ вутă лайăх
çунать.
Çул çӳрекен ларса
канать.

> Çемçетекен паллă *(ь)* сăмах вĕçĕнчи е сăмах варринчи хупă сасă çемçине кăтартать.

69-мĕш задача. Çак сăвва çырса илĕр. **Ь** палла аялтан туртăр.

Çуркунне пуçланни.

Йăлтăртатать сар хĕвел,
Кунран кунах ăшăтать.
Сисмесĕрех сивĕ хĕл
Çур ăшшине парăнать.
Пур çĕрте те шурă юр
Хĕвелпеле пусăрнать.

Пĕчĕккĕнех çуна çуль
Навусланать, хуралать.

70-мĕш задача. Хăвăр тетрадĕрсем çине çулталăк хушшинчи уйăх ячĕсене йĕркипе çырса илĕр. **Ь** палла аялтан пĕр йĕрпе туртăр.

Январь, февраль, март, апрель, май, июнь, июль, август, сентябрь, октябрь, ноябрь, декабрь.

71-мĕш задача. Çак тупмалли юмахсене çырса илĕр. **Ь** паллăллă сăмахсене аялтан туртăр.

Куçне чарнă ларать,
Темĕнле калаçать,
Пăрça пек сикет,
Этемле ишет.

Хăй хуралçă мар—
Пурне те ир
вăрататъ.

72-мĕш задача. Çак сăмахсене тĕслĕхре кăтартнă пек улăштарса çырăр.

Т ĕ с л ĕ х: *кай—каять.*

кай- . . .	выля- . . .	уç- . . .
çыр- . . .	кур- . . .	хăвала- . . .
вула- . . .	пăр- . . .	сăв- . . .

73-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр. **Ь** паллăллă сăмахсене аялтан пĕр йĕрпе туртăр.

Пирĕн колхозра выльăх ăратлă. Тихасене Улькка пăхать. Хĕлле эпĕ конькипе

ярӑнатӑп. Халь эпӗ шкулта вӗренетӗп. Шӑллӑм урамра вылять, юртан кӗлетке тӑвать.

74-мӗш задача. Ҫакӑнта ҫырнӑ предложенисене ҫырса илӗр. Сӑмахсем вӗҫӗнче точкӑсем вырӑнне ***ать*** е ***ет*** ҫырӑр.

Шӑнкӑр-шӑнкӑр шыв юх..., шӑнкӑрч чӗппи шыв ӗҫ.... Уй-хирсенче тыр кашл..., халӑх чӗри савӑн.... Ҫырма юх... кӗрлесе, юрӑ юрланӑн туйӑн.... Ешӗл курӑк ӑшӗнче сап-сарӑ чечек ӳс....

Юхать, ларӑть йышши хытӑ уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсен вӗҫӗнче ***т*** хыҫҫӑн ***ь*** ҫыраҫҫӗ. ***Ӗҫет, ӳсет*** йышши ҫемҫе уҫӑ сасӑллӑ сӑмахсен вӗҫӗнче ***т*** хыҫҫӑн ***ь*** ҫырмаҫҫӗ.

75-мӗш задача. Точкӑсем вырӑнне ***мать, мест*** сыпӑк ҫырӑр.

Выльӑх калаҫ..., чӗрӗп хытӑ утай..., ылттӑн хӗвел курӑн..., вӗрипеле пӗҫерт..., хурт-кӑпшанкӑ хӗвӗш..., тарса пытаннӑ хӗллене. Шӑтӑк-ҫурӑка питӗрмесен, пӳрт ӑшӑ пул....

76-мӗш задача. Тунине пӗлтерекен сӑмахпа юнашарах туманнине пӗлтерекен сӑмах ҫырӑр.

Тӗслӗх: *ҫырать-ҫырмасть.*

ҫырать- . . .	тултарать- . . .	каять- . . .
ҫыпӑҫать- . . .	ӳкет- . . .	вулать- . . .
тӑхӑнать- . . .	илет- . . .	хисеплет- . . .
пӑхать- . . .	килет- . . .	юрлать- . . .

масть сыпӑкра ***т*** хыҫҫӑн ***ь*** ҫыраҫҫӗ,   ***мест*** сыпӑкра ***т*** хыҫҫӑн ***ь*** ҫырмаҫҫӗ.

77-мӗш задача. Предложенисем ҫырса парӑр. Вӑл предложенисенче ҫак сӑмахсем пулччӑр:

Пӑхать, шутлать, вулать, каять, каймасть, выртать, вылять, тытать.

9 §. *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене ҫырасси.

78-мӗш задача. Аялта ҫырнӑ сӑмахсене ҫырса илӗр.

Белов, колхоз, телефон. революци, Зайцев, звонок, август, килограмм, букварь, республика, Давыдов, радио, грузовик, ещёк, журнал.

79-мӗш задача. Малалли сӑмахсене ҫапла уйӑрса ҫырса илӗр:

1. Хула ячӗсем:
2. Ҫын ҫӳрекен япаласем:
3. Хушаматсем:
4. Ытти сӑмахсем:

Ленинград, пароход, Данилов, Григорьев, библиотека, автобус, велосипед, Ульяновск, милици, конституци, съезд, стахановец, комсомолец, журнал.

80-мĕш задача. Çак предложенисене çырса илĕр, *б, г, д, з, о* саспаллиллĕ сăмахсене аялтан пĕр йĕрпе туртăр. Вĕсене мĕнле сăмахсенче çырнине асăрхăр.

Августăн 18-мĕшĕ — Совет Союзĕнчи халăхсен авиаци кунĕ. Совет Союзĕн геройĕсем Чкалов, Беляков, Байдуков, Громов, Юмашев, Данилин ку таранччен пулман вĕçевсем турĕç. Вĕсем Мускавран çурçĕр полюсĕ урлă Америкăна самолетпа вĕçсе çитрĕç.

> *Б, г, д, ж, з, о, ф, ц, щ* саспаллисене вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсенче анчах çыраççĕ.

10 §. Мăшăр сăмахсене çырасси.

Ача-пăча.

Выльăх-чĕрлĕх.

81-мĕш задача. Çак предложенисене вуласа тухăр, унтан çырса илĕр.

Ĕне сĕт-çу парать. Выльăх-чĕрлĕх пулсан, аш-какай та пулать. Вăрман — уй-хир хӳтлĕхĕ. Кайăк-кĕшĕк — хурт-кăпшанкăн

тăшманĕ. Ача-пăча урамра вылять. Пирĕн кил-çурт таса.

82-мĕш задача. Çак мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Сӳс-кантăр, урлă-пирлĕ, кукăр-макăр, унта-кунта, çăкăр-тăвар, пир-авăр, йăлтăр-ялтăр, кĕпе-йĕм, йĕпе-сапа, савăт-сапа, инкек-синкек, пуçлă-вĕçлĕ.

> ***Сӳс-кантăр, урлă-пирлĕ, кукăр-макăр*** йышши сăмахсене мăшăр сăмахсем теççĕ. Мăшăр сăмахсене кĕске йĕрпе пĕрлештерсе çыраççĕ.

83-мĕш задача. Çак предложенисенче тĕл пулакан мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Совет Союзĕн çĕрĕ-шывĕ пуян. Кайăк ферминче чăх-чĕп, хур-кăвакал усраççĕ. Пирĕн колхозра утмăл-çитмĕл кил. Кашни килĕ хаçат-журнал çырăнса илет. Пирĕн ялăн ана-çаран аслă.

84-мĕш задача. Çакăнта çырнă предложенисенче тĕл пулакан мăшăр сăмахсене çырса илĕр.

Хăш чух тăман тапранса каять, айĕн çийĕн вĕçтерет, çулсене шăла-шăла лартать. Уй-хире, çырма-çатрана юр вĕçтерсе тултарать. Çумăр пăт-пат ӳккелет. Йытăсем лăй-лай харкашаççĕ. Ирхине пит-куçа çăвăр. Çулла вăрманта тĕрлĕрен хурт-кăпшанкă пит нумай.

85-мĕш задача. Хăвăр шухăшласа предложенисем тăвăр. Предложенисенче çакăнта çырнă мăшăр сăмахсем пулччăр.

Тĕслĕх: *Пирĕн колхоз кăçал тырă-пулă нумай пуçтарчĕ.*

Тырă-пулă, чĕлхе-çăвар, кĕнеке-хаçат, йăлтăр-ялтăр, пиллĕк-улттă.

86-мĕш задача. Хăвăртан шухăшласа мăшăр сăмахлă виçĕ предложени çырăр.

§ 11. Вĕреннине аса илсе çирĕплетесси.

87-мĕш задача. Çак статьяна վуласа тухăр. Унтан кашни предложенинче миçе сăмах пуррине калăр.

Çуркунне вăрманта.

Ачасемпе вăрмана кайрăмăр. Ĕнер анчах çумăр çăватчĕ. Паян хĕвел ытла та савса пăхать. Ăшă, лăпкă çил пурне те ачашлать. Вăрмана часах çитрĕмĕр. Унта кайăк сассисем янăраççĕ. Йывăççен çулçисем сарăлнă. Çĕмĕрт çурăлнă, чечекĕсем шап-шурă. Уçланкăсенче курăксем ешереççĕ, чечексем çурăлаççĕ. Чечексем çинче пыл хурчĕсем вĕçеççĕ. Вĕсем пыл тума тутлă сĕтек пуçтараççĕ.

88-мĕш задача. Çак сăмахсене хăвăр тетрадĕрсем çине çырса илĕр. ***Б, г, д, ж, з, ц, о, ф*** саспаллисене пĕр йĕрпе аялтан туртăр.

Октябрь, революци, фабрика, завод, рабочи, коммунист, республика, пароход, журнал, грузовик.

89-мӗш задача. Ҫак сӑвва вуласа тухӑр. Сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн татса вулӑр. Сӑввине пӑхмасӑр калама вӗренӗр.

Конькипе.

Вӗҫсе пырап конькипе—
Хӑлхасем хӗп-хӗрлӗ.
Чӑр-чар чӗрсе пынипе
Пӑр ҫийӗ пит йӗрлӗ.
Йӑлтӑр-ялтӑр ҫиҫӗм пек
Йӑр та яр пыратпӑр.
Алла-аллӑн тытӑнса,
Савӑнса ярнатпӑр.
Астумасӑр хӑш чухне
Такӑнса ӳкетпӗр.
Кӗҫ тӑратпӑр та каллех
Ҫиҫӗм пек вӗҫетпӗр.

90-мӗш задача. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Уҫӑ сасӑсене аялтан туртӑр.

Ир тӑрсассӑн, пит ҫусассӑн, кӗҫ чупатпӑр шкулалла. Шкула ҫитнӗ, кӗнеке тытнӑ, вӗренетпӗр малалла. Тӑнкӑр-танкӑр танкӑртатрӗ параппан сасси, ян-янах янӑрарӗ пионер юрри.

91-мӗш задача. Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Йӗркерен йӗркене каҫнӑ чухне сӑмахсене тӗрӗс сыпӑкласа каҫарӑр.

Пирĕн ял.

Пирĕн ял çулран çулах чаплăланса пырать. Унта çĕнĕ çуртсем, клуб, больница, шкул турĕç. Çырма хĕрĕнче питĕ пысăк сад ÿстерчĕç. Ялтан пур еннелле те тикĕс çулсем хыврĕç. Ял витĕр час-часах автомобильсем иртсе çÿреççĕ.

92-мĕш задача. Çак сăвва çырса илĕр. Çырса илнĕ чухне хытă уçă сасăсене пĕр йĕрпе, çемçе уçă сасăсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр. Сăввине пăхмасăр калама вĕренĕр.

Хĕвелĕмĕр Сталин

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Аслă тусăмăр, çулпуç!
Телее куратпăр халĕ
Ĕнтĕ эпир,
Эпир ĕнтĕ куçран куç.

Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин!
Эс çутатăн ĕмĕрех.
Савăнать-çке пĕтĕм халăх,
Патăн ырлăх,
Ырлăх патăн эс пире.

Тавтапуç, юратнă Сталин,
Тавтапуç сана, мухтав!
Çут хĕвелĕмĕрçĕм—Сталин,
Эсĕ—юрă,
Юрă эсĕ, эс ялав!

Цена 45 коп.

С. С. ЯГУНОВ

ГРАММАТИКА ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКА

ЧАСТЬ I

ГОСИЗДАТ ЧАССР
ЧЕБОКСАРЫ — 1941